# Иосиф ДМИТРИЕВ

## АРĂМ ПОЭМИ

АРĂМЛА: Тĕнчене, пурнан пурнăçа, çынна Усалтан тасат

*Автор*

1

кунта çырмийĕ пур та шывĕ çук
шывĕ те пур — кĕме çыранĕ çук
кунта вăрманĕ пур та сулхăн çук
сулхăнĕ пур — хўтлĕх юманĕ çук
кĕрес-каяс пулать çав вăрмана
упа кĕмен-тухман сĕм чăтлăха
каçас-каяс пулать çав çырмапа
упи каçман-туман сив шурлăхпа
унта хĕвелĕ пур — çутийĕ çук
çути пулсан та — çутăлмалăх çук
унта уй-хирĕ пур — тыррийĕ çук
тырри пулсан та — тăранмалăх çук
кĕрсе каяс пулать çав вăрмана
упи кĕмен-тухман сĕм чăтлăха
каçса каяс пулать çав çырмапа
упи каçман-туман сив шурлăхпа

2

хĕвел вут хучĕ анăç вучахне
сип-симĕс кун кăварланса çунать
хула çине тĕрки-тĕркипеле
хаяр кăвайт çумрийĕ çăвăнать:
ман
кун
çунать
эп пурăннă-айкашнă вăхăтсем
тарăхнисем-савăннисем
вутра çунса тасалĕç-и — пĕлместĕп
е
кĕл пулса пуçăм çине ўксе
шухăш-сăмах та ĕç усалĕнче путса çухалĕç

е
юн тымарĕсен варне çурса кĕрсе ӳксе
таса кăвар хăвачĕ
пĕчĕк хĕвелĕн чăмакки арканнă кăкăрта çуратĕ

3

тĕлĕкĕмре-и ку шăплантăм.
чĕре ирĕлсе пĕвере юхса анчĕ.
чĕресĕр хĕрхӳ ĕсĕклӳсĕр куççульсĕр.
шур уйăх çутипе пите çăватăп кĕçĕр.
чĕлхесĕр эп чĕнместĕп кăшкăрмастăп.
хупланнă çăварпа.
леш тĕнчери асаттесем тăрса лармалăх
сассăр кăшкăратăп.
чĕресĕр.
ĕсĕклӳсĕр.
тарăхусăр.
шур уйăх çутинче.
шур сухаллă асаттесемпе.
шуралнă питсенчен.
типмен куççульсене.
шăлатпăр.
те.
çăвăнатпăр.

4

Аннемĕрĕн ахлатăвĕ хĕрĕх чалăш хĕрлĕ
Ту çинче пурăнать

5

...чĕркуçленес темесĕр чĕркуçленмерĕм
инкек çĕре ӳкессинчен ик аллăма çĕклерĕм
çӳле пăхатăп та: йывăрланать хĕвел
çĕре пăхатăп та: çунать-мĕн çĕр тĕл-тĕл...
çич ĕмĕр ячĕпе Сана сăмах хушатăп
çич ĕмĕр чăтнипе ик ӳпкемрен калатăп:
Упра!
йывăрланан хĕвелĕн хаярне сирсем!
Сыхла!
хаярланан хĕвелĕн йывăр куçне сирсем!
...чĕркуçленес темесĕр чĕркуçленместĕп эпĕ
çĕре инкек ӳкессинчен ик аллăма çĕклетĕп

ал хуралать: çилсем хура иккен
хул хуçăлать: хура усал иккен...
ачамăн ачийĕсенĕн ячĕпе калатăп
ачийĕсенĕн ачийĕсен телейĕшĕн ӳксе эп
ӳпкеме çурса
сывлăш тасалăхне ăшри хурлăхпала хуплатăп:
Упра!
хура çилсен хура усалне сирсем!
Сыхла!
хура усалăн синкер çилне сирсем...
УПРА-СЫХЛА.

6

Юнланнă сан, аннеçĕм, чĕркуççи...
чĕркуçленсе пучах пуçтартăн пулĕ,
чĕркуçленсе уйра çӳрерĕн пулĕ,
ачусемех те ӳсчĕр терĕн пулĕ... Ӳсрĕмĕр те,
Аннеçĕм,
мĕн тăвас?
Юнланнă сан, аннеçĕм, чĕркуççи...
чĕркуçленсе, Çӳлтисене кĕлтурăн пулĕ,
ывăл-хĕрне сывлăш памашкăн ыйтрăн пулĕ,
сывлăш çиттĕр тесе, ху сывламарăн пулĕ...
Сывлăш çитмест,
Аннеçĕм,
мĕн тăвас?
Юнланнă сан, аннеçĕм, чĕркуççи...
шурă саппун çаксан хупланĕ-ши,
юну саппун çине тапса та тухмĕ-ши,
хĕрлĕ юнпа шăпа тĕрленмĕ-ши?
шăпа тĕрри чĕн пушă çырăвне
сарса хурсан, тĕнче пăрланмĕ-ши?
шăпа тĕрри çу сĕрнĕ атăсем
пĕр айăпсăр чуна таптанă кунсене
суймасăр каласан, тĕнче чăтайĕ-ши?
шăпа тĕрри хăй юнлă çиппипе
колхоз уй-хирĕнче çӳрен мĕлкесене
чĕртсе тăратнă чух тĕнче тĕпренмĕ-ши?
Юнланнă сан, аннеçĕм, чĕркуççи...

7

Сакăр тĕслĕ саманин
Сăрлă сакки тикĕс мар,

Тикĕс пулнă пулсан-и?
Алла сава тытмăттăм,
Ķуçа шăрпăк кĕртмĕттĕм,
Суккăрланса юлмăттăм,
Тутăх пăта кăмăлне —
Юнлă юпа çунатне
Ыталаса тăмăттăм,
Юнпа юпа çумăттăм.

8

Çитмĕл та çичĕ шыв урлă килтĕн-и,
хыçăма мар, çичĕ ют, ума ÿк.
Утмăл та ултă уй урлă килтĕн-и,
хыçăма мар, çичĕ ют, ума тăр.
Çитмĕл те çичĕ хĕçпе хăмсаратăн-и,
хыçăмран мар, çичĕ ют, умран хăмсар.
Тăхăрвун та тăхăр тăванăм пур,
тăхăрвун та тăхăр тăванăмăн хурри пулăн,
усалу, ултаву, хĕçÿ айне пулăн!

9

Эй, Вут Ама! Аслă Вут Амăшĕ!
Апатăма пĕçермелĕх,
выльăхăма ăшăтмалăх,
шăмшакăма çемçетмелĕх ăшшуна пар.
Хăвăн аслă хăватупа хаяр вута пĕтер,
урнă каçсем килсен, урнă вута сÿнтер.
Хĕртсуртăмăр сурпанĕнчи таса вутна упра,
ирпе çутнă вута ие алне ан пар,
каçпа хупнă вута уша ăшнех хăвар,
Эй, Вут Ама! Аслă Вут Амăшĕ!
Хĕрĕх чалăш хĕрлĕ Ту çинчи Чăваш Арăмне
çăлма килекен ывăлна кăтарт!
Унăн пĕр пичĕ хĕç, пĕр пичĕ вут тееççĕ...

10

...ĕненнĕ пек шухăшласан,
ĕненнĕ шухăша таптамасан,
суя суйса, усал сунса, усал туса пурăнмасан,
Амăш ахлатăвне илтекенсем пулсан тин
тĕнчене килĕ Ман Ывăлăм: пĕр пичĕ — хĕç,
пĕр пичĕ — вут...

Çичçĕр çул вĕренĕ ылхан хуранĕ айĕнчи вут сӳнĕ,
Вăл килсен...
Çичçĕр çул пуç çинче шăхăрнă Çĕлен сăнни касăлса ӳкĕ,
Вăл килсен...
Вăл килĕ: Чăваш ывăл-хĕрĕ ĕненнĕ пек шухăшласан,
шухăшне май сăмах тупсан,
сăмахне май ыр ĕç тусан...
Вăл калĕ: Чăваш ывăл-хĕрĕ Хĕрлĕ Ту ахлатăвне илтет.
Вăл калĕ: тамăк хуранне çăтмах хуранĕ тесе суякансем пĕтет.
Вăл калĕ: çичĕ ĕмĕр пире çичĕ хут çирĕпрех пулма çитмĕл çичĕ тĕрлĕ хурлăх янине пĕлетпĕр.
Вăл калĕ: Пĕрлĕхре çеç çăлăнăç пуррине ĕненетпĕр.
Вăл калĕ: Чăваш чĕрĕлнĕ!
Чăваш чăмăртаннă!
Чăваш вилĕмрен çĕкленнĕ!